Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* N 56 (4625) *1998 çулхи май (çу) уйăхĕн 20-мĕшĕ, юнкун* *Палăртнă хакпа.*

## Пуçлăха - свидетельство



**Кул Шариф мечĕтне тума пурлăх енчен пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен Фонд свидетельствине Нурлат районĕпе Нурлат хула администрацийĕн пуçлăхне Фатих Саубанович Сибагатуллина панă. Сире тата сирĕн районăрта пурăнакансене пурне те Кул Шариф мечĕтне юсаса çĕнетме пурлăх енчен пулăшнăшăн тав тăватпăр, çирĕп сывлăх, ĕçре ăнăçлăхсем сунатпăр.**

**Фонд директорĕ Ф.М.САФИН.**
**Тĕп бухгалтер И.И.ШАГАЕВА.**
**Тутарстан Республики, Хусан, Кремль.**

## Саламлани

*Кăçал май уйăхĕнчи уявсен ретне пирĕн республикăра пуçласа Пичет кунĕ хушăнать. Нурлат районĕн администрацийĕ тата халăх депутачĕсен пĕрлештерне Совечĕ район хаçатçисене, полиграфистсене тата обществăлла корреспондентсен йышлă отрядне, кĕскен каласан, пирĕн районăн, хулан тата ялсен пурнăçĕн объективлă хроникине тунă çĕрте вăй хуракансене пурне те професси уявĕпе чун-чĕререн саламлаççĕ тата çак саламлани çумне районта тухса тăракан хаçата çырăнса илекенсем пурте хушăнасса шаннаççĕ. Хаçат тиражĕ ўснĕçем ўсет, ку вара сирĕн творчество пултарулăхне пысăк хак панин тĕп критерийĕ.*

*Сирĕн ĕçĕр вăхăтăн кирек мĕнле тапхăрĕнче те кăткăслăхпа, яваплăхпа тата тĕрлĕ йышши задачĕсемпе палăрса тăнă. Эсир яланах хăвăрăн тĕп принципăра - фактсемпе событисене тĕрĕс те конкретлă пĕлтерессине асра тытнине палăртмалла, материала тарăн тĕпчесе, вулакансем патне çитерме тата вĕсемпе тачă çыхăну тытса ĕçлессин шайне яланах ўстерме, вĕсен интересĕсене пĕлсе тăма тăрăшатăр. Хальхи кăткăс вăхăтра та редакци коллективĕн пуçарулăхне пула хаçат производствин технологине улăштарма ăслă-тăнлă куçни тата "районкăн" ку чухнехи çĕнĕ сăн-сăпатне тума пултарни пире савăнтарать.*

*Ĕç коллективĕсене экономикăпа социаллă задачăсен анлă комплексне пурнăçа кĕртессине йĕркелўçĕ вырăнĕнче активлă хутшăннăшăн тата районпа хула пурнăçне пур енчен те тата анлă çутатнăшăн тав тăватпăр.*

*Сире пурне те ырлăх-сывлăх, творчество ăнăçлăхĕсем, телей сунатпăр.*

*Ф.СИБАГАТУЛЛИН,*
*Нурлат районĕпе хула администрацийĕн пуçлăхĕ, халăх депутачĕсен пĕрлештерне Совечĕн председателĕ.*

## Программа анлăччĕ

Майăн 14-мĕшĕнче, кĕçнерникун район администрацийĕнче вырăнти самоуправленин Совечĕсен ĕç тăвакан секретарĕсем хутшăннипе иртнĕ канашлу программи конкретлă та анлăччĕ. Унта ачасен çуллахи канăвне, çара кайма çул çитмен çамрăксемпе ĕçлессине йĕркелес, граждансене пурăнакан вырăн тăрăх вăхăтлă регистрацилес, ялсенче пурăнмалли çуртсене инвентаризацилес ыйтусене, организациллĕ-массăллă ĕçе активлатас тĕлĕшпе тăракан задачăсене пăхса тухрĕç. Канашлăва хутшăннисем умĕнче халăх депутачĕсен пĕрлештерне Нурлат Совечĕн аппаратĕн, РОО, çар комиссариачĕн, паспортпа-виза службин, пенси фончĕн, БТИ тата ЗАГС яваплă ĕçченĕсем тухса каларĕç.

## Черетре - сахăр кăшманĕ, кукуруза

**"Тухăç-98" пресс-центр пĕлтерет**

Районти çĕр ĕçченĕсем çурхи пĕрчĕллĕ культурăсене ăнăçлă акса пĕтерсе тата тепĕр тĕп пĕлтерĕшлĕ культура - сахăр кăшманне акассине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Ку ĕçе 14 хуçалăх пуçăннă. Сахăр завочĕн хушма хуçалăхĕнче ку ĕçе паянхи ыран вĕçлеççĕ - ĕнерхи кун тĕлне сахăр кăшманне кунта 320 гектар акнă. "Киклĕ", "Рассвет" хуçалăхсенче çак культура 280-200 гектар йышăнать. Кузнецов ячĕпе хисепленекен, Хафизов ячĕпе хисепленекен, "Кондурча" тата ытти ассоциацисенче çак ĕçĕн хăвăртлăхĕ пысăк.

Хăвăртлăхпа пĕрле пахалăх çинчен те манмаççĕ, сахăр кăшманĕ акмалли лаптăксене маларахах ятарлă гербицидсемпе ĕçлесе хатĕрлеççĕ.

Пĕтĕм хуçалăхсенче тенĕ пекех кукуруза силослăх акаççĕ. "Киклĕ", "Кондурча", Кузнецов ячĕпе хисепленекен, "Татарстан", "Черемшан" ассоциацисенче тата нефтебазăн хушма хуçалăхĕнче çак ĕçе пысăк лаптăксем çинче пурнăçланă.

## Каллех малта

"Рассвет" хуçалăхри чĕкĕнтĕр акса ўстерекен ăстаçă Касым Минеахметович САТДАРОВ кăçал та ĕçе пысăк хăвăртлăхпа пурнăçлать - кунсерен 20 гектар çине тутлă тымар акать.

* * *

"Киклĕ" хуçалăхра çак ĕçе пурнăçлакан Азат Саитович АХМЕТВАЛИЕВĂН та опыт çителĕклĕ - кашни кун 18 гектар акать.

* * *

Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Гусман Хайбуллович ЗАЙДУЛЛИН кунсерен 60 гектар çинчи тăпрана пусăрăнтарать, çапла майпа смена нормине 240 процент пурнăçлать.

* * *

Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Валерий Игоревич НОВИКОВ, çурхи культурăсене акнă çĕрте лайăх результатсем тунăскер, ытти агрегатсем валли тăпра хатĕрленĕ ĕçре те тăрăшса вăй хурать - Т-4 çумне КПС-5 агрегат çаклатса кунсерен 25 гектар çинчи тăпрана культивацилет, урăхла каласан, 2,5 норма пурнăçлать.

## Техника юсавлă пулсан

**Ака-98**

Кантурăн кăтарту хăми çине çĕнĕ сведенисемлĕ "Çиçĕм" çакса хунăччĕ.- Хирти ĕçсем тытăнсанах кашни кун виçĕ тĕле "Çиçĕм" çакатпăр, - тет хуçалăх экономисчĕ Т.П.Варламова. - Куратăр-и, пирĕн малта пыракан ĕçченсем мĕнлерех кăтартусем тăваççĕ.

Чăнах та "Çиçĕмре" лайăх хыпарсем сахал мар. Çапла, нўрĕк тытнă çĕрте вăй хуракан И.П.Казаков смена нормине 165 процент, урпа акакан Р.И.Вахитов 188 процент тултарнă.

- Кусем пирĕн пурнăçĕ тăршшĕпе тыр-пул ўстерекенсем.

Тамара Петровна Анатолий Яллин çинчен калать. Вăл çурхи культурăсем акнă çĕрте нормăна 213 процент тултарнă. Марат Камалов та ăна 183 процент пурнăçланă. Хуçалăхра пурнăçне тырпул ўстерессине халалланă ăстаçăсене хисеплеççĕ, вĕсемшĕн çĕр, тухăç пĕлтерĕшĕ сăваплă.

Çапла, йĕркеллĕ те туслă пуçланă "Тĕрнеç" хуçалăх ĕçченĕсем кăçалхи кăткăс çуркуннехи хирти ĕçсене. Хуçалăх хирĕсенче хальхи вăхăтра 35 трактор ĕçлет. Çĕр ĕçченĕсем участоксене суйла-суйла вăй хураççĕ. Эпир пулнă кун тĕлне хуçалăхра çурхи культурăсене акма палăртнă лаптăксене акса пĕтеретчĕç ĕнтĕ. Акакан тăвата агрегат хирте иртен тытăнса каçчен вăй хурать.

- Чи кирли вăл техника лайăх хатĕрлени, эпир кунпа питĕ кăмăллă, - тет хуçалăх ертўçи Р.Г.Шайдуллин. - Çакăншăн эпир юсав мастерскойĕн заведующине Владимир Михайлович Куликова уйрăмах тав тăватпăр.

Владимир Михайлович мастерскоя 15 çул ертсе пырать, юсав ĕçĕсене кĕркуннех пуçлать, вĕсене тапхăрăн-тапхăрăн, хыпалан-масăр, пысăк пахалăхпа ирттерет. Ăна пулăшакансем Валерий Рябов моторист, Михаил Трофимов слесарь-аккумуляторщик, пысăк разрядлă токарь Владимир Молчанов та хăйсен ĕçĕсен ăстаçисем шутланаççĕ.

Техника юсавлă пулсан, хирте ĕçлеме те кăмăллă.

**С.НУРУЛЛИНА.**



## Пĕрлехи тĕллевпе

***Хресченсен хуçалăхĕсен "Сĕнче" ассоциацийĕ.*** Хальхи вăхăтра хуçалăхри хирсенче кам кăна ĕçлемест пулĕ. Ял ĕçченĕсене çурхи ĕçсене пурнăçлама кунта пурăнакансем пурте тенĕ пекех пулăшаççĕ. Кунта Александр Павлович Борисовăн ятне чи малтан асăнаççĕ, вăл хăй вăхăтĕнче кирпĕч заводĕнчен урапаллă кивĕ трактор сутăн илнĕ те ăна юсаса ĕçе юрăхлă тунă. Александр Павлович председателĕн сĕнĕвĕпе килĕшнĕ те халь вăл иртен тытăнса мĕн каç пуличчен хирте вăй хурать, акакан агрегата удобренисемпе тата вăрлăхпа тивĕçтерет. Акакан агрегатпа Василий Григорьев ĕçлет, унпа пĕрле ĕçлеме те кăмăллă, çав вăхăтрах вăл ыттисене те вăр-вартарах пулма хистет. Иртнĕ çул пĕччен 600 гектар ытла акнă. Кăçал та вăл акнă ана 300 гектара яхăн шутланать. Акă ĕлкĕр ăна! Борисов вара ĕлкĕрет, акана пĕрремĕш çул кăна хутшăнать пулин те, тăрăшса вăй хурать. Николай Николаевич Шухров вара 9-мĕш çуркуннене хирте кĕтсе илет. Вăл вăрман касакан, ака вăхăтĕнче вара К-700 тракторпа хире тухать, хуçалăх ертўçисем унăн ĕçĕпе кăмăллă. Чăнах та, тухăçшăн тăрăшни тĕрлĕ професси çыннисене пĕрлештерет. Чи кирли вăл - пĕрлехи тĕллев пулни.

**С.ХАЙРУЛЛИНА.**

# Эмелсĕр сиплесси...

** Сывлăх сыхлавĕ*

***Çакăн çинчен калаçма тытăнсан эпир ирĕксĕрех экстрасенссене, гипнотизерсене аса илетпĕр, анчах та паян вара калаçу пачах вĕсем çинчен мар, районти тĕп больницăри реабилитаци уйрăмĕнчи сиплев гимнастики, физкультурăпа сиплев кабинечĕ тата унта ĕçлекен çынсем çинчен пырать. Пирĕн героиня - Танзиля Мухамметовна ЮСУПОВА.***

Ирĕк те çутă пӳлĕм. Пĕр енче тĕкĕр стена, тепĕр енче - тренажерсем, урайĕнче палас. Музыка хуллен илтĕнет. Танзиля Мухамметовна ĕçне пăрахмасăрах пирĕнпе калаçать. Приемра - вăтам çулти арçын. Декабрь уйăхĕнче вăл икĕ аллине те тăм илтернĕ. Çавăн хыççăн виçĕ уйăх хушши вăл врачсем патĕнче сипленнĕ. Анчах та ĕç малалла кайман: пӳрнисем хускалман, çавăнпа вара врачсем ăна ЛФК янă. Кунта пĕрремĕш сеансрах, пӳрнисене тата ал лаппине сехет хушши йăваланă хыççăн шанăçне çухатман пациент пӳрнисем ăшăннине туйнă. Виççĕмĕш сеанса вăл пӳрнисене хăй тĕллĕн хускатнă. Пурĕ вара 10 сеанс иртмелле.

Кунта остеохондроз, гинекологи, сколиоз тата ытти чылай чирсене сиплеççĕ. Уйрăмах кунта çынсем аманнă хыççăн çӳреççĕ. Иртнĕ çул физкультурăпа сиплекен кабинетра 472 пациент сипленĕ, пурĕ 4885 процедура йышăннă пулнă. Ку вăл кирлинчен 30 процент ытларах.

Ачасем хушшинче ытларах сколиоз чирĕ сарăлнă. Шел пулин те, эпир питĕ сахал хускану тăватпăр, çав шутра пирĕн ачасем те. Ку вăл çурăм шăмми кукăрăлнин тĕп сăлтавĕ, тет Танзиля Мухамметовна.

Хăш-пĕр ачасем вара питĕ ансат упражненисене, аллисене çӳле çĕклемеллине, аяккинелле ямаллине, малалла тăсмаллине пĕлменни ăна питĕ тĕлĕнтерет. Нумаях пулмасть кунта чугун çул çинчи больницăран янă 80 ачана йышăннă. Кунсерен 10-шар ача 45-шер минут сиплев физзарядки тăвать.

Кунта курпунĕ тухма тытăннă пĕкĕрĕлчĕк хул-çурăмлă ачасем сеансем иртнĕ хыççăн пуçĕсене çĕклесе, тӳрĕ хулпуççисемлĕ тухса кайнине курсан, врач-специалистăн кăмăлĕ çĕкленет.

Тĕрĕс мар кĕлетке, çурăм шăмми кукăрăлни педагогсене те пăшăрхантарать пулас. Çавăнпа та вĕсем Танзиля Мухамметоваран час-часах пулăшу ыйтаççĕ.

- Эпĕ мĕнле упражненисем тумаллине калатăп, анчах та ку ыйтăва унпа кăна татса пама çук тесе шутлатăп, мĕншĕн тесен сиплев гимнастикине пĕлни çеç сахал, вĕсене туймалла. Çав вăхăтрах упражненисем ятарласа суйласа илнисем пулмалла.

Кĕскен каласан, вăл шкулти учительсемпе çирĕп çыхăну тытнине шăпа пӳрни тесе калаймастăн. Ĕç акă мĕнре, 16 çул каярах Хусанти педагогика институтĕнчи физкультура факультетĕнчен вĕренсе тухса, сакăр тĕрлĕ спортпа разряд илнĕскер, ĕç шыраса хулари пĕр шкула, теприне кайнă, анчах та кăлăхах, çамрăк специалист валли вырăн пулман.

Шăп кăна çав вăхăтра, медицина учрежденийĕсенче физкультурăпа сиплессине пысăк тимлĕх уйăрма тытăнсан, пирĕн больницăра та реабилитаци уйрăмĕ уçнă. Çавăн чухне вăл ГИДУВ çумĕнче ятарлă хатĕрленӳ иртнĕ.



- Сиплев физкультури вăл - медицинăпа педагогика килĕшсе тăни, - тет Т.Юсупова хăйĕн профессийĕн тĕп тупсăмне ăнлантарса.

- Урăхла каласан, кун пек майлă сиплевре педагогика тата медицина пĕлĕвĕпе усă курмалла.

Танзиля Мухамметовна чирлисене шăп çапла сиплет. Çавăнпа та врачпа иртернĕ кашни тĕлпулăва ăшшăн та тав туса аса илеççĕ.

Халь те ăна тав тăвакан пациентсем сахал мар. Сăмахран, гинекологи уйрăмĕнчен сипленме янă вăл пĕлекен сакăр хĕрарăм сиплев гимнастикине иртнĕ хыççăн ача амăшĕсем пулнă. Пухтелĕнчи сколиозпа чирленĕ Таньăна чĕртни те специалист тав сăмахĕсене тивĕçлине çирĕплетет. Вăл кунта çулталăк тăршшĕпех çӳренĕ: хĕлле те, çулла та, кĕскен каласан, канмалли кунсемсĕр пуçне, кашни кун. Çав вăхăтра вăл Танзиля Мухамметовнапа туслашнисĕр пуçне, унăн ĕçне те юратса пăрахнă, хĕрачан малашлăхĕ шăп кăна çакăнта палăрнă. Татьяна институтран вĕренсе тухнă, халь Çырançи Чаллăри шкулсенчен пĕринче физкультура учителĕ пулса ĕçлет. Хăйĕншĕн чăн-чăн çывăх çын пулса тăнăскере, вăл халь те манмасть: ЛФК час-часах кĕрсе тухать, опыт пухать, çаплах вĕсем иккĕшĕ чун-чĕререн калаçаççĕ.

Акă тепĕр хумхантаракан тĕслĕх. Нумаях пулмасть пĕр хĕрарăм хăйĕн хĕрне çакăнта илсе килме тытăннă. Шăнăрне упражнени тунă, ури тунисемпе лапписене çемçетнĕ. Çавăн хыççăн тĕлĕнтермĕш пулнă, хĕрача урисене кăшт хускаткалама тытăннă.

Кĕскен каласан, çак чĕрĕлме май çук чирпе чирлекен ачасем кунта нумай килеççĕ. Шел пулин те, ансат хатĕрсем - мечĕксемпе патаксемсĕр, кивĕ велотренажерсăр пуçне кунта ытти аппаратсем çук. Хальхи вăхăтри тĕрлĕ операци пурнăçлакан тренажерсем пулсан питĕ лайăх пулмалла! Халлĕхе вара Танзиля Мухамметовнана хăйĕн ăста, ывăннине пĕлмесĕр тĕрлĕ упражненисем пурнăçлакан аллисемпе ырă та пурне те хĕрхенекен чĕри пулăшаççĕ. Вăл чирлисене эмелсемсĕр, физкультура упражненийĕсемпе сиплес тесе вăйне, вăхăтне шеллемесĕр тăрăшать.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**

**Ӳкерчĕкре: Т.М.Юсупова пациентсемпе.**

## "Сирĕн приказăра пăрахăçламалла..."

** Район прокуратуринчен*

Нурлатри çул-йĕр тăвакан управлени начальникĕн февралĕн 16-мĕшĕнчи 19-мĕш номерлĕ приказне, К-700 тракторăн 5 камерине çухатнăшăн çичĕ ĕçчен ĕç укçинчен пурĕ 1675 тенкĕ тытса юлмалли çинчен пĕлтерекенскере, прокурор законсăр тесе пăрахăçлама йышăннă.

Сăлтавĕ вара акă мĕнре. РСФСР КЗоТн 118-мĕш статйипе килĕшуллĕн предприятие, учреждение, организацие ĕç тивĕçне пурнăçланă чух сиен кӳнĕшĕн рабочи е служащи айăпĕпе пулнă пулсан çеç тата çав вăхăтра çак условисем пулсан çеç укçа-тенкĕ тытса юлаççĕ:

а) сиен чăн-чăнах пулсан;

б) ĕçчен закона пăссан;

в) сиенĕн сăлтавĕ ĕçченĕн хăтланăвĕпе çыхăннă пулсан;

г) сиен ĕçченĕн айăпĕпе пулнă пулсан.

Нурлат РОВДине çул-йĕр тăвакан управлени панă справка тăрăх, ял хуçалăх камерисем унта çухалман. Унсăр пуçне водитель, хуралçăсем (çиччĕшĕн хушшинче) пурлăх енчен яваплă çынсем шутланмаççĕ, пурлăхшăн вĕсемпе яваплă пулни çинчен калакан договор туман.

Çавăнпа та çӳлерех асăннине тĕпе хурса, прокурор айăплисенчен 1675 тенкĕ тытса юлмалли çинчен приказа пăрахăçлама ыйтать, протеста 10 кун хушшинче пăхса тухмалла.

*<u>Хаçатра пичетленĕ хыççăн</u>*

# Талантсене ӳстермелле

Ф.Хузяхметован "Талантсене пытаратпăр..." статьине вуласа тухнă хыççăн çырмасăр чăтаймарăм. Обществăна хальхи кăсăклантаракан ыйтусене тишкернĕ вăхăтра, эпир, шкулта вун-вун çул вăй хунăскерсем, "Эпир хамăрăнне ĕçленĕ" тесе аяккинче тăрса юлаймăпăр.

Эпĕ шкулта вăтăр çул ытла ĕçлерĕм, çавăнпа та Хузяхметова пăшăрханăвне ăнланатăп. Вĕрентӳ патриочĕсем çакăн пек каланине массăллă информаци хатĕрĕсенче эпир час-часах куратпăр тата илтетпĕр.

Анчах та çак çул-йĕр тĕлĕшпе конкретлă йышăнусем кăларакансем çак шухăша хăçан ăнланĕç-ши? Çав вăхăтрах эпир пирĕншĕн çӳлтен тăрăшасса кĕтмелле те мар. Пултаруллă ачасем валли классем е кружоксем йĕркелеме укçа-тенкĕ кирлĕ пулни те паллă ĕнтĕ. Çавăнпа та вырăнсенче мĕн пултарнă таран ыйтăва татса пама тăрăшмалла. Пирĕн ăру опычĕ те тĕслĕх пулма пултарать. Эпĕ педагогра ĕçлеме тытăннă вăхăтра çĕнĕ "мода" тухрĕ - шкулсене политехнизацилеме пуçларĕç. Ун чухне 1957 çулччĕ. Унччен эпĕ Ульяновскра столяр пулса ĕçлеттĕм. Облоно представителĕсем пирĕн цеха ачасене ĕçе вĕрентме пĕлӳ туяннă çынсем шырама пычĕç. Ĕç кĕнеки тăрăх эпĕ унччен учитель пулса ĕçленине пĕлсен, вĕсем мана шкула яма йышăнчĕç. Эпĕ килĕшрĕм.

Паллах ĕнтĕ, мастерскойра ачасене вĕрентмелли хатĕрсем çитместчĕç. Çутĕç валли ун чухне те укçа-тенкĕ сахал уйăратчĕç. Анчах та кăмăл пулсан тем те тума пулать. Кирлĕ станоксем, хатĕрсем туянма хамăр ĕçлесе укçа тăвас терĕмĕр. Пирĕн тĕслĕх пурччĕ - Макаренко хăйĕн ачисемпе. Вĕсем фотоаппаратсем туса кăларма пултарнă пулсан, эпир вара çынсене усăллă мĕнле те пулин япала тăваймăпăр-им? Çапла, эпир вешалкăсем, хыççăр пукансем, этажеркăсем тата ытти япаласем те тума пуçларăмăр. Сутса тунă укçапа кирлĕ станоксем, хатĕрсем тата ыттине туянтăмăр. Паллах ĕнтĕ, кирлĕ документсене директор маларахах хатĕрлерĕ. Хатĕр изделисене сутнине, укçана ăçта тăкакланине тĕрĕслесе тăчĕç. Изделисене ĕç урокĕсенче тата кружоксенче тăваттăмăр.

Хальхи вăхăтра, рынок хутшăнăвĕсем пурнăçăн пĕтĕм сферинче аталаннă май ыйтусене вырăнта татса пама çăмăлрах пулĕ тесе шутлатăп. Çӳлерех йăла изделийĕсем туса кăлармалли тĕслĕх çинчен каласа панăччĕ. Ялсенче вара пахча çимĕç, тырă ӳстерсе çитĕнтерме, выльăх-чĕрлĕх самăртма ансатрах пулĕ. Лайăх шутласа, хастаррăн пуçăнсан укçа-тенкĕпе çыхăннă ыйтусене татса пама пулĕччĕ.

Малалла вĕренӳ предмечĕсем çинчен темиçе сăмах калас тетĕп. Тĕрĕс наукăсен предмечĕсен сехечĕсене чакарни пӳлĕмсенче сехет сеткисене тăвакан чиновниксем малалли çинчен шутламаннине пĕлтерет. Япони производствин технологийĕ мĕншĕн лайăхрах пулнине ăнланмаççĕ-ши вĕсем? "Самсунг" ĕмĕрĕ çывхарни çинчен телевизорпа кунне темиçе хутчен те кăтартнине курмаççĕ-ши? Телевизорсем тата ытти приборсем вĕсенчен хăçанччен туянăпăр-ши? Хамăр патра çавăн пек изделисем туса кăларма тытăнсан лайăхрах пулмĕ-ши? Çапла тума вара шкулсенче тĕрĕс наукăсен предмечĕсене ытларах тимлĕх уйăрмалла. Ку ыйтăва, ман шухăшпа, шкулпа район ертӳçисем çĕклемелле. Вĕсем вĕрентӳ министерствинчен сехет сеткисене хальхи вăхăт ыйтнине ăнланакан çынсем тума ыйтмалла.

Пĕлӳре - вăй теççĕ. Çак сăмахсем тĕрĕс пулнине эпĕ хам тӳсрĕм. "Гулага эпĕ мĕнле чăтса ирттертĕм" статьяра ("Туслăхăн" 2-мĕш номерĕ, 1992 çулхи январĕн 4-мĕшĕ) эпĕ математика лайăх пĕлнипе хамăн ларутăрăва çăмăллатни çинчен çырса кăтартнăччĕ. Манăн çав пĕлӳсем тата ĕçри хăнăхусем пулман пулсан, чун тахçанах леш тĕнчере вĕçсе çӳренĕ пулĕччĕ, хам вара тахçанах лагерь тусанне çаврăнмалла. Анчах та мухтав Турра, эпĕ сывă юлтăм, халь теха çитмĕл çултан иртнĕ пулин те ĕçлетĕп.

**Х.АХМЕТОВ.**
**Нурлат хули.**

# Пăрахса хăварнă тракторпа хуçасăр пăрусем тата тырă вăрлăхĕ тăкăнни çинчен



**Ака вăхăтĕнче çак кирлĕ ĕçрен никам та аяккинче тăмасть. Иртнĕ эрнере ГАИ ĕçченĕсем трактор паркĕсем хатĕррипе хатĕр маррине тата водительсем хушшинче дисциплина шайĕ мĕнле пулнине тĕрĕслес тĕллевпе рейд ирттернĕ.**

**Рейд бригадин ĕçĕ çинчен ГРОВД ОГАИ начальникĕ Х.АЮПОВ майор каласа парать.**

-Дисциплинăна пăснине вара сахал мар палăртрăмăр. Çапла, Мамăк-Базарлă Матак çулĕ çинче Зузеево патĕнче хыçалти ураписĕр ларакан трактора асăрхарăмăр. Ку хресченсен хуçалăхĕсен "Тĕрнеç" ассоциацийĕн тракторĕ пулни паллă пулчĕ. Трактор хирте ĕçлемелле пулнă иккен, анчах та В.Курганаев тракторист никамран ыйтмасăр Селенкĕш ялне кайма тухнă, çул çинче кăшт кăна кювета кайман, техникине çавăнтах пăрахса хăварнă та вăл çĕмĕрĕлни çинчен ертӳçĕсене пĕлтермен те. Кунта вăл тăватă кун хушши тăнă - анчах та çакă никама та пăшăрхантарман...

Рейд бригади малалла, Кузнецов ячĕпе хисепленекен тата Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацисен хирĕсен еннелле çул тытрĕ. Кунта вара пире "симĕс" хирсенче пăрусемпе ĕнесем çӳренине курма тӳр килчĕ. Асфальт сарнă çул урлă каллĕ-маллĕ каçса вĕсем транспорта çӳреме кансĕрлеççĕ.

Çаплах рейд пынă вăхăтра эпир элеватортан хире вăрлăх турттаракан автомашинăсенчен тырă тăкăннине те асăрхарăмăр. Çапла, 8235 ЕВ номерлĕ КамАЗ автомашинăран (водителĕ С.Зайдуллин) кукуруза пĕрчисем тăкăнса пынипе вăл ăçталла кайнине палăртма питĕ çăмăл пулчĕ. 8292 ЕВ номерлĕ КамАЗ водителĕ Ф.Кадыров тырра çул çине акса пынă. Сăлтавĕ - кузовне лайăх питĕрменнинче.

Водительсен пурин те çак ыйтăва пысăк тимлĕх уйăрмалла. Ку - пирĕн пĕрлехи тата питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ задача.

**Кузнецов ячĕпе хисепленекен ассоциаци хирĕсенчи тырă калчисене таптанине ӳкерсе илнĕ.**

Акнă анасене таптанăшăн тата тухăçа сиенлетнĕшĕн мĕнле явап тыттараççĕ? Тунă сиен калăпăшне мĕнле тĕрĕс палăртмалла? Штраф шыраттарса илме камăн право пур? Ку тата çавăн йышши ытти ыйтусем вырăнти самоуправленин Совечĕсен, ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисене тата граждансене час-часах хумхантараççĕ. Çак тĕллевпе эпир 1997 çулхи июнĕн 7-мĕшĕнче "Юридически консультаци" рубрикăпа район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ А.Гильманов алă пуснă материала кĕскетсе тепĕр хут пичетлетпĕр.

Пĕлтĕрхи март уйăхĕнчен Федераллă Законпа çирĕплетнĕ РСФСР Кодексĕн административлă йĕркене пăсни çинчен калакан 96-мĕш статйин çĕнĕ редакцийĕ вăйра шутланать.

# Тухăçа таптанăшăн тата урăхла сиен кӳнĕшĕн явап тыттармалла

Çапла, ял хуçалăх организацийĕсемпе предприятийĕсен тырă, лартнă йывăç-курăк анисене таптанăшăн, капансене е ял хуçалăх культурисен тухăçне сиенлетнĕшĕн йĕркелӳ-право формисене, хресченсен(фермерсен) хуçалăхĕсен, уйрăм хушма хуçалăхсен выльăх-чĕрлĕхне, кайăк-кĕшĕкне пăхмасăр -

граждансене виçĕ чи пĕчĕк ĕç укçинчен тытăнса вунна çити штраф хураççĕ, должноçри çынсене - пилĕк чи пĕчĕк ĕç укçинчен тытăнса çирĕме çити.

Çулталăк хушшинче чăн-чăн статьян пĕрремĕш пайĕпе пăхса хăварнине пăснăшăн администраци енчен айăпланнă çын çӳлерех асăннă ĕçсемшĕн -

граждансене пилĕк чи пĕчĕк ĕç укçинчен тытăнса çирĕме çити штраф хураççĕ, должноçри çынсене - вунă чи пĕчĕк ĕç укçинчен тытăнса хĕрĕхе çити.

Тырă е лартнă йывăç-курăк анисемпе автомобильпе е тракторпа, комбайнпа е урăх машинăпа иртнĕшĕн -

виçĕ чи пĕчĕк ĕç укçинчен тытăнса вунна çити штраф хураççĕ.

Тырă е лартнă йывăç-курăк анисемпе лашапа иртнĕшĕн -

пĕр чи пĕчĕк ĕç укçинчен тытăнса пиллĕке çити штраф хураççĕ.

Çапла, РСФСРăн администраци правăна пăсни çинчен калакан законĕн 96-мĕш статйине кĕрекен правăна пăсни çинчен протоколсене самоуправленин ял Совечĕсем полномочи панă должноçри çынсем çырма тивĕç. Кусем предприятисемпе организацисен представителĕсем, сиен тӳснĕ пурлăхăн хуçисем (хуçалăхсен председателĕсем тата вĕсен çумĕсем, управляющисем, агрономсем, бригадирсем тата ыттисем) пулма пултараççĕ.

Ял хуçалăх культурисене таптанă, пăснă выльăхсене, кайăк-кĕшĕке вĕсен хуçисене палăртас тĕллевпе тытса чарма та пултараççĕ.

Таптанă май пулнă тăкака вырăнти самоуправленин Совечĕн, хуçалăх представителĕсене кĕртсе йĕркеленĕ комисси, тăкака саплама тивĕçлĕ предприятин, учрежденин представителĕсене е граждансене хутшăнтарса палăртать.

Тăкака саплама тивĕçлĕ çынсем пымасан та комисси тăкака палăртать.

Ял хуçалăх организацийĕсен тата предприятийĕсен, хресченсен (фермерсен) хуçалăхĕсен е уйрăм хуçалăхсен акнă анисене кĕтӳçĕ, водитель е урăх ĕçчен хăйĕн ĕç тивĕçне начар пурнăçланипе таптаттарнăшăн, хирти тухăçа сиенлетнĕшĕн е пĕтернĕшĕн палăртнă тăкака РФ ГК 1064, 1068-мĕш статйисен правилисене тĕпе хурса, тивĕçлĕ предприятисем, учрежденисем тата организацисем тӳлемелле.

Хăшпĕр чухне тăкаксене айăплă çынсем тӳлемелле. Ял хуçалăх организацийĕсене тата предприятийĕсене хăйсен ĕçченĕсем (кĕтӳçĕсем, водительсем, трактористсем е ытти ĕçченсем) хăйсен ĕç тивĕçĕсене пурнăçланă вăхăтра сиен кăтартнă пулсан, тăкака çак ял хуçалăх предприятийĕсен Уставĕпе тата РФ КЗоТчĕпе килĕшӳллĕн сапламалла.

РСФСРăн администраци правăна пăсни çинчен калакан Кодексĕн 40-мĕш статйипе килĕшӳллĕн, административлă йĕркене пăснипе гражданина, предприятие, учреждение, организацие пурлăх енчен сиен кӳрсен администраци комиссийĕ, самоуправленин ялти, поселокри Совечĕ, халăх судйи административлă йĕркене пăснă ыйтăва пăхса тухнă вăхăтра тăкак чи пĕчĕк ĕç укçин пĕрре иккĕмĕш пайĕнчен иртмест пулсан, ăна тӳлессине те палăртать. Районти суд вара - сиен хăть мĕн чухлĕ пулсан та.

Юридически çынсем хушшинче тăкака тӳлемелли тавлашу сиксе тухсан ăна арбитраж сучĕ татса парать.

Акнă анасене таптанă, хирте ял хуçалăх культурисен тухăçне пăснă е пĕтернĕ тĕслĕхсене РСФСРăн администраци правăна пăсни çинчен калакан Кодексĕн 199, 200-мĕш статйисемпе килĕшӳллĕн самоуправленин ялсенчи Совечĕсем пăхса тухаççĕ.

Çав вăхăтрах ку категорири ĕçсене район, хула администрацийĕсен пуçлăхĕсен çумĕнчи административлă комиссисем, çаплах вырăнти самоуправленин Совечĕсен административлă комиссийĕсем пăхса тухма пултараççĕ.

## КРИМИНАЛ - ДОСЬЕ

# Тӳрлетме май çук йăнăш

Нурлат хулинче пурăнакан виçĕ ача амăшĕн Х. виллине тупнă хыççăн ăна хĕнесе вĕлерни палăрнипе иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕн çурринче уголовнăй ĕç пуçарнă. Çак преступление тăвакана, 1958 çулта çуралнă, ниçта та ĕçлемен К. гражданина, маларах пĕр хутчен çеç мар судпа айăпланăскере, тытса чарнă.

Çак "туслăх" хĕрарăма чи малтан та нимĕн лайăххине шантарман. Вăл çакна хăй те сиснĕ, анчах та çыхăнăва "мирлĕ" татма вăй-хăват çитереймен. Ăçтан вăй пулмалла, унăн та пĕр тĕллев - ĕçес шухăш кăна пулнă вĕт. Ку арçын унпа питĕ çепĕç те япшар пулмасан та, сĕтел хушшинче ĕçсе ларассине вара яланах йĕркелеме пултарнă.

Тен, вăл эрех ытларах ĕçнĕ вăхăтра ăна йăлăхтарнă, йĕрентернĕ те пулĕ. Вăрçнине, хирĕçнине вара шута та илмен. К. хăйĕн аллисене яланах ирĕке янă, хĕрарăм хăйне хăй хӳтĕлейменни вара ăна тата та ытларах уртарнă, çавăнпа та вăл ăна ăçтан лекнĕ çавăнтан тапнă. Çакăн пек тĕслĕхсене свидетельсем те, çав шутра Х. ачисем те çирĕплетнĕ, çавăнпа та ку преступлени тĕлĕшпе те айăплама йышăннă. Анчах та Х. çав каç та сывă юлнă пулсан, çавăн пек хăтлану малалла та тăсăлнă пулĕччĕ-ха. Мĕншĕн тесен ялан тенĕ пекех çапла пулнă вĕт.

Анчах та ку ĕç инкекпе вĕçленнĕ. Ун çинчен вара протокол чĕлхипе каласа парар-ха. Çапла, "1997 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕнче çĕрле, 24 сехет тĕлнелле, хĕрарăмпа арçын пĕрле эрех ĕçнĕ хыççăн К. хĕрарăма ăсатма кайнă. Тельман урамĕнчи шыв пусăмĕн башни хыçĕнче Х. тата К. пĕр-пĕрин хушшинче хирĕçсе кайнă. Вăрçăннă вăхăтра К. хĕрарăма çăварне хуптарас тесе ăна хĕнеме тытăннă, çапса, тапса 50 çĕртен амантнă хыççăн Х. тăнне çухатнă. К. çакна курнă та хĕнеме чарăнса "Васкавлă пулăшу" чĕннĕ. "Пулăшу" килессе кĕтнĕ вăхăтра К.каллех хĕрарăма темиçе хутчен çапнă. Кăкăр шăммипе кăкăрĕнчен пуклак япалапа хытă çапнăран хĕрарăм больницăна илсе çитерсенех вилсе кайнă."

Кайран, касса пăхнă хыççăн та, врачсем ăна хăтарса хăвараймманни паллă пулнă - хĕненипе унăн ăш-чиккине пĕтĕмпех амантнă. - Эпĕ ăна вĕлерес темен, - тесе тӳрре тухма тăрăшнă К., хĕненĕ чухне мĕн шухăшланă-ши вăл. Айăплакан юлашкинчен çапла пĕлтернĕ, "К. хăйĕн хăтланăвĕпе РФ Уголовнăй Кодексĕн 4-мĕш пайĕнчи 111-мĕш статйинче пăхса хăварнипе килĕшсе тăракан преступлени тунă, урăхла каласан, пĕлсе тăрсах сывлăха сиенлетнĕ, хĕрарăма хĕрхенмесĕр, тарăхтарса, нушалантарса вĕлернĕ".

Ку - айăпламалли тĕп статья тата чи йывăрри. Айăпланакан К. Х. гражданкăна ытти чухне, маларах та пĕр хутчен кăна мар хĕненине суд ыйтнипе прокуратура тепĕр хут пăхса тухнă, халь вара ку ĕçе йышăннă, приговор вуламалли кăна юлнă, халь çаплах РФ Уголовнăй Кодексĕн 1-мĕш пайĕнчи 245-мĕш статйипе - выльăха хуліганла хăтланупа, хĕрхенмесĕр вĕлернĕшĕн те айăплĕç.

Сăмах айăпсăр кушак çинчен пырать, К. Х. патне черетлĕ хут хăнана пырсан, вăл ури айĕнче явăнса çӳренĕ иккен. Кил хуçи хĕрарăмĕ ăна хирĕç ан кăшкăртăр тесе, асăрхаттарса пулĕ К. кушака кăмака çумне темиçе хутчен çапса вĕлернĕ. Анчах Х. хăйĕнпе те çавăн пекех пуласси çинчен ун чухне шухăшламан та пулас...

Д.ТЯМАЕВА.

## Ветерансене хисеплесе

"Нурлатнефтешырав" ООО коллективĕшĕн Çĕнтерӳ кунĕн уявĕ уйрăмах хаклă, унта фронтра пулнисем сахал мар. Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче хăюллă çапăçнă, килĕсене тĕрĕс-тĕкел таврăннă, мирлĕ вăхăтра вара ырми-канми ĕçленĕ ветерансем çинчен предприяти ертӳçисем манмаççĕ. Кăçал та чаплă митинг хыççăн вĕсем, 83 çын, пĕр çемье пек "Березка" стловăйра пуян апат хатĕрленĕ сĕтелсем хушшинче пуçтараннă. Коллективăн пултарулăх артисчĕсем вĕсем валли концерт хатĕрленĕ: хĕрарăмсен ансамблĕ тата уйрăм юрăçăсем çепĕç те чуна хумхантаракан юрăсене шăрантарнă. Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕн кавалерĕ Исмай Галимов вĕсене тимлĕх уйăрнăшăн тав туса, сăмах тухса каланă. Укçаллă конверт пани те ветерансене савăнтарнă.

## туслашма та пулăшать

**Волейбол ĕçлеме те,**

Нурлатри 2-мĕш номерлĕ шкул-гимназире вĕрентекенсем волейбол секцине нумай çул хушши çÿреççĕ ĕнтĕ. Шкулти спорт залĕнче вĕсем спорт хăнăхăвĕ туянни хăйĕн результачĕсене панă. Физкультура учителĕ В.И.Севастьянов ертсе пыракан волейболистсен команди хулари волейболла вылякан хĕрарăмсен командисем хушшинче кăçал çĕнтерÿçĕ пулчĕ.

Командăри хĕрсене лайăх вылянăшăн Нурлатри спорт комитечĕ хаклă парнесем пачĕ.

Анчах та çĕнтерÿ чи кирли мар.

Волейболла вылянине пула учительсен команди хăйсен ĕçтешĕсен тата вĕренекенсен хисепне кăна тивĕç пулман, çаплах вĕсем 3-мĕш тата 4-мĕш номерлĕ шкулсенчи волейболисткăсен командисемпе туслашнă. Çĕнтерÿçĕкомандăра Э.Ф.Садыкова (команда капитанĕ), Н.А.Бажанова, А.М.Казакова, Н.В.Коннова, Р.В.Яруллина, А.З.Замалетдинова, Н.З.Аюпова, Т.Т.Суслова, Ф.З.Курбанова выляççĕ.



Шкул коллективĕ хăйĕн юратнă команди çĕнтернипе мăнкăмăлланать, çĕнтерÿçĕсем вара хăйсен вăййипе вĕрентекенсемпе вĕренекенсене çакăн пек илемлĕ спорта ытларах та ытларах явăçтарасса шанас килет.

**М.ХИСАМОВА,**
**2-мĕш номерлĕ шкул-гимнази директорĕн класс тулашĕнчи ĕçсене пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлекен çумĕ.**

*Улах юррисем*

## Анкарти хыçĕнче тип шур ути

Чĕнтĕрлĕ те кĕпер, ай, айĕнче
Чĕнтĕрлĕ тутăрсем çурăмăр.
Йывăр саманара çуралтăмăр -
Ăрăскалсăр çынсем пултăмăр.

Утатăп-утатăп, ай, ÿсĕнмест,
Элле каялла май пусап-ши?
Шухăшла-шухăшла эп тĕлĕнеп,
Элле çамрăк ĕмĕр иртет-ши?

Улача та чăлха, пурçăн кĕпе
Пулсан пулĕ пуянсен çийĕнче.
Ватăлмăп, ватăлмăп ан тейĕр-ха,
Ватăлтарать пире ку тĕнче.

Анкарти хыçĕнче тип шур ути,
Çулас пулать типĕ пулсан та.
Пире калакансем мĕн каламĕç,
Тÿсес пулать: хамăр начар та.

Хĕвел анать тесе ан хуйхăрăр,
Хĕвел ансан çÿлте уйăх пур.
Çын хурлать-ха тесе ан шухăшлăр,
Çын хурлин те çÿлте турă пур.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.**

## "Автобус" операци

### е Пассажирсене турттарассин хăрушсăрлăхĕн шайĕ çинчен тепĕр хут

Пассажирсене турттарнă чухне хăрушсăрлăха тивĕçтересси патшалăхăн тĕп задачисенчен пĕри пулса тăрать. Хальхи вăхăтра пирĕн районта пассажирсем турттарассине тивĕçтерекен 40 ытла предприятипе организаци шутланать, вĕсенче пассажирсене турттаракан 150 ытла транспорт единици. Нурлатри автотранспорт предприятийĕнче, "Нурлатнефть" НГДУн технологи транспорчĕн управленийĕнче, тулли мар явап тытакан "Татнефть-Нурлатнефтешырав" обществăри çынсене транспортпа чи нумай турттараççĕ.

Автовокзалран кунсерен автобуссем 18 маршрутпа тухса каяççĕ, вĕсем 600 çынна яхăн тивĕçтереççĕ (канмалли тата уяв кунĕсенче 2000 çынна та çитет). Çапла, 1997 çулта 200000 ытла пассажир турттарнă. Анчах шел пулин те, автотранспорт предприятийĕсенчен нумайăшĕ пассажирсене турттаракан транспорт докуменчĕсен нормативĕсен требованийĕсене пурнăçламаççĕ. Тĕпрен илсен, водительсене суйласа илмелли, вĕсен квалификацийĕсене ÿстермелли, маршрут çÿрекен çĕрте хăрушă участоксене палăртмалли требованисене пурнăçламаççĕ. Водитель ĕç тата транспорт дисциплинине, ĕç тата кану режимĕсен графикне пурнăçланине, транспорт юсавлипе юсавсăррине тĕрĕслесе тăнине предприяти администрацийĕ япăх контроллесе тăнипе пассажирсене турттарассин хăрушсăрлăхĕн шайĕ чакать. Кунта чи малтан водительсене рейса тухас умĕн тата рейсран таврăннă хыççăн медицина тĕрĕслевĕ ячĕшĕн кăна ирттерни, çаплах транспорт хатĕрĕсен техника шайне начар тĕрĕслени çинчен сăмах пырать.

Пассажирсене турттаракан транспортра çулпа çÿрессин хăрушсăрлăхне тивĕçтерес тĕллевпе майăн 15-мĕшĕнчен тытăнса июлĕн 15-мĕшĕччен республикăра "Автобус" операци иртет.



Çак вăхăт хушшинче пассажирсене турттаракан транспорта ГАИ ытларах тимлĕх уйăрĕ.

Автобуссемпе вахта автомобилĕсен техника шайне тĕрĕслеме шутлать. Уйрăмах çĕнĕ йышши аптечкăсем, огнетушительсем пуррине, сигнализаторсем юсавлипе юсавсăррине тата ыттине тимлĕх уйăрĕç.

Çаплах çак категори уйрăм транспорт хатĕрĕсене тĕрĕслĕç: тĕрĕс усă курнине тата упранине, водителĕн пассажирсем турттарма ирĕк паракан лицензи пуррине.

Çавăнпа пĕрлех автобуссене гаража лартман тата вĕсемпе хăйсемшĕн усă курнă тĕслĕхсем ан пулччăр тесе мерăсем йышăнĕç.

**Х.АЮПОВ,**
**Нурлатри ГРОВД ОГАИ начальникĕ, милици майорĕ.**

**Пенси фончĕн Нурлат районĕпе Нурлат хулин уйрăмĕ мĕнпур предпринимательсене тата ĕçсĕр çынсене 1998 çулхи майăн 23-мĕшĕччен районти Пенси фондне пыма ыйтать. Патшалăх Пенси страхованийĕн системинче страхланнă çынсене страховани свидетельствисем илме анкетăлама хăйсемпе паспорт пулмалла.**

**Фонд вырăнĕ: район ĕçтăвкомĕ, 1-мĕш хут.**

**1998 çулăн иккĕмĕш çур çулне тĕп тата республика изданийĕсене çырăнасси малалла пырать:**

**- тĕп изданисене июнĕн 1-мĕшĕччен.**

**- республикăра тухса тăраканнисене июнĕн 15-мĕшĕччен.**

**Организацисемпе предприятисене çырăнассине палăртнă сроксенче йĕркелеме ыйтатпăр.**

## *Сĕт сутакансене пĕлсе тăма!*

***Сĕт сутакансене Нурлатри суту-илÿ бази çак таварсене 10 процент йÿнĕрех сутать: Волжски сĕтел-пукан комбиначĕ туса кăларнă сĕтел-пукан, фарфор, эмаль савăт-сапа, электротоварсем: инкубатор, çу арманĕ, люстрăсем, кĕпе-йĕм çăвакан "Волга" машина, хуçалăх таварĕсем: çăрасем, пăтасем, сăрăсем, ДВП, кĕреçесем, рубероид, шифер, цемент.***

***Справкăсене самоуправленин вырăнти Совечĕсенче е сĕт-çу комбиначĕн бухгалтерийĕнче илмелле.***

### *М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.*

### *Пирĕн патра кăна!*

**Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тÿлевсĕр!**

**Сипленĕ кун, эрнекун, майăн 22, июнĕн 5,19-мĕшĕсенче районти культура çуртĕнче 14 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.**

# ПĔЛТЕРӲСЕМ

*Чаллăпуçĕнчи икĕ пÿлĕмлĕ хваттере Нурлат хулинчи çавăн пек хваттерпе улăштаратпăр. 1997 çулта туса кăларнă "Нива-21213" автомашина сутатпăр, хаклă мар. Адрес: Ватутин урамĕ, 26.*

* * *

*Дача сутăнать. Телефон: 5-19-23.*

* * *

*ГАЗ-3309 автомобильпе тиев турттарса паратпăр. Адрес: Куйбышев урамĕ, 29-7 е "Альянс" магазин.*

* * *

*Сахăр завочĕн микрорайонĕнче приватизациленĕ пĕр пÿлĕмлĕ хваттер сутăн илетĕп. Телефон: 5-20-47.*

* * *

*Пĕр пÿлĕмлĕ хваттер сутăнать. 4-12-02 номерлĕ телефонпа 17.00 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*УАЗ-452 сутатпăр. Адрес: Козлов урамĕ, 14-20. 5-19-82 номерлĕ телефонпа 17.00 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Силикат кирпĕч, шифер, хĕрлĕ кирпĕч, цинкланă листсем сутатпăр. 5-21-22 номерлĕ телефонпа 14.00 сехетрен пуçласа 16.00 сехетчен ыйтса пĕлмелле. Свидетельство 268-97 номерлĕ.*

* * *

*"ИЖ-ПЛАНЕТА" мотоцикл тата Кивĕ Чаллăра никĕслĕ дача участокĕ сутăнать. Адрес: Дружба урамĕ, 38-2.*

* * *

*1992 çулта туса кăларнă, 2000 километр çÿренĕ "Урал" мотоцикл, 4-мĕш номерлĕ шкул çывăхĕнче гараж сутатпăр. Телефонсем: 65-8-43, 65-2-87.*

* * *

*КСТГВ-12 газ хуранĕ, "Мир" холодильник сутатпăр. Телефон: 2-22-49.*

* * *

*ВАЗ-21053 сутăнать. Телефон: 5-18-69.*

* * *

*Димитровград хулинче туса кăларнă паха сортлă çăнăх (пĕр миххи 105 тенкĕ), Заинск хулинчен илсе килнĕ сахăр песокĕ (пĕр миххи 190 тенкĕ) сутатпăр. Тÿлевсĕрех леçсе паратпăр. Нурлат хулинчи телефон 5-17-99, 8.00 сехетрен пуçласа 20.00 сехетчен шăнкăравламалла. Лицензи Б-97 сериллĕ, номерĕ - 162381.*

* * *

*5х3 метрлă мунча пури сутăнать. Адрес: Гиматдинов урамĕ, 127-3.*

* * *

*Пахчаçăсен "Локомотив" обществинче дача, "Урал" мотоблок, 4 пин тенкĕ, сутăнаççĕ. Тел.: 2-19-77.*

* * *

*Шалтан капăрлатман чул çурта хушса тÿлесе "Газель" микроавтобуспа е хваттерпе улăштаратпăр, вариантсем пулма пултараççĕ. Адрес: Дачная, 2-4.*

* * *

*"53-мĕш СМУ" ООО ЭО-4124, ЭО-2621 машинăсемпе ĕçлеме машинист-экскаваторщиксем васкавлă кирлĕ, ĕçшĕн контрактпа тÿлеççĕ.*

* * *

*Апат-çимĕç комбиначĕ çывăхĕнче гараж сутăнать. Посредник тел.: 5-23-36.*

* * *

*Т-40 трактор (тележкăпа) сутăнать, лайăх шайра. Киклĕ ялĕнчи Гайнутдина ыйтмалла.*

* * *

*Чишма ялĕнче çурт сутăнать. Мунча, çутçанталăк газĕ, 25 сотка пахча пур. 17 сехет хыççăн 5-17-04 телефонпа шăнкăравламалла.*

* * *

*Мотоблок тележки сутăнать. Тел.: 2-12-25.*


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860.